1938 АПРЕЛ 30 ШАМАТКУН
99 (4912)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

21-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 6—23

Партири тата партире тӑман большевиксене—суйлав комиҫҫисене

Пайан епӗр „Чӑваш Коммунӗ" хаҫатра ЧАССР Тӗпӗҫтӑвком президиумӗ РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиҫҫийӗсен составне ҫирӗплетни ҫинчен йышӑннӑ постановленийе пичетлесе кӑларатпӑр. Халӗ вырӑнсенче участкӑсенчи суйлав комиҫҫисене тивӗҫлӗ кандидатсем тӑратас тӗлӗшпе общӗствӑлӑ организацисем, ӗҫҫыннисен общӗствисем хӗрсех ӗҫлеҫҫӗ. Рабочисемшӗн, хресченсемшӗн, интеллигенцишӗн — кашни суйлавҫӑйӑн вӗсен суйлав комиҫҫисенчи представителӗсем ҫинче мӗнле пысӑк ответлӑ тӑни паллӑ пулмала.

Суйлав комиҫҫисене общӗствӑлӑ организацисен, ӗҫҫынни общӗствисен—профессилӗ сойузсен, коммунисла организацисен, комсомол организацисен, хапрӑксенчи, совхозсенчи робочисемпе служащисен пухӑвӗсен, колхозсенчи хресченсен пухӑвӗсен представителӗсенчен тӑратаҫҫӗ. Социалисӑм ӗҫӗшӗн, партипе совет влаҫӗ ӗҫӗшӗн кӗрешес ӗҫре хӑйсен активне кӑтартнӑ чи лайӑх, чи шанчӑклӑ рабочисене, колхозниксене, совет интеллигенцин представителӗсене суйлав комиҫҫийӗсене кӗртмеле. Чӑваш АССР Тӗпӗҫтӑвкомӗ РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиҫҫисенче камсем пулмалине пӑхсан, епӗр ҫакна лайӑх куратпӑр. Округсенчи суйлав комиҫҫийӗсенче Чӑваш республикӗнчи ӗҫҫыннисен чи лайӑх та чи шанчӑклӑ представителӗсем тӑраҫҫӗ.

Пелчӗк районӗнчи Ленин йачӗпе тӑракан колхоз членӗсем хӑйсен пухӑвӗнче ЧАССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Пелчӗк округ суйлав комиҫҫин членне колхозри чи паллӑ стахановкӑна, пӗтӗм колхозниксем йуратакан Т. П. Оҫипӑвӑ йулташа пысӑк хаваслӑхпа тӑратнӑ. Ҫавнашкалах Куславкка районӗнчи Кармӑнри Карл Маркс йачӗпе тӑракан колхоз членӗсем Чӑваш АССР Тӗпӗҫтӑвком членне, совет, парти тата колхоз ӗҫӗнче ӗҫлесе пиҫнӗ Йусупӑвӑ йулташа Тӗрлемес суйлав округне представителе кӗртме йышӑннӑ. Йусупӑвӑ йулташ кандидатурине сӳтсе-йавнӑ чухне колхозниксем колхозницӑсем суйлав комиҫҫийне ӗҫлеме чи шанчӑклӑ, ӗҫре тӗрӗсленӗ ҫынсене суйлама кирли ҫинчен хӗрӳллӗн калаҫнӑ. Темиҫе ҫын тухса калаҫнӑ хыҫҫӑн колхозниксен пухӑвӗ Йусупӑвӑ йулташ ҫак ответлӑ ӗҫре ӗҫлеме тивӗҫлӗ тесе шутланӑ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне иртерес тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи, участкӑсенчи комиҫҫисем питӗ пысӑк та ответлӑ ӗҫ тӑнине партипе совет организацисем ӑнланса илмӗ кирлӗ, суйлав комиҫҫисене ҫакнашкал авторитетлӑ ҫынсене тӑратаҫҫӗ те ӗнтӗ.

Анчах та, хӑшпӗр округсенчи суйлав комиҫҫисене общӗствӑлӑ организацисем, ӗҫҫынни общӗствисем хӑйсен представителӗсене тӑратнӑ чухне ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхнисем пулнӑ. ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет суйлавӗн опычӗ ҫак йӑнӑшсене ҫийӗнчех тӳрлетме пулӑшрӗ. Ҫак йӑнӑша участкӑсенчи суйлав комиҫҫисене тӑратнӑ чухне уйрӑмах хисепе илмеле.

Халӗ РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиҫҫисен составне ҫирӗплетнӗ. Анчах ҫакӑнпах ӗҫ пӗтет, тесе шутлани пысӑк йӑнӑш тупи пулӗччӗ. Халӗ пирӗн участкӑсенчи суйлав комиҫҫисен составӗсене ҫирӗплетес тӗлӗшпе нумай ӗҫлемеле. Ку пит те пысӑк та ответлӑ ӗҫ пулать. Участкӑсенчи суйлав комиҫҫисен хисепӗ питӗ пысӑк, пирӗн республикӑра вӗсем 977 пулмала. Ҫак 977 суйлав участкисене ӗҫлеме пултаракан председателӗсем, председателӗ заместителӗсем, ҫекретарӗсем, комиҫҫи членӗсем кирлӗ. Ҫак участкӑсенче темиҫе пин ҫын ӗҫлемеле. Ҫакӑнтан ӗнтӗ участкӑсенчи суйлав комиҫҫисене представителӗсем тӑратасси ҫине кашни общӗствӑлӑ организацин, ӗҫҫынни общӗствисен пит те тимлӗн пӑхмала.

Суйлав комиҫҫисене общӗствӑлӑ организацисен, ӗҫҫынни общӗствисен представителӗсем тӑратассине чи демократилӗ суйлав ҫистеми хушнӑ тӑрӑх туса иртермеле. Суйлав комиҫҫисене кӗртме кандидатсем суйласа илес ӗҫе халӑхӑн хӑйӗн активлӑ хутшӑнмала. Участкӑсенчи суйлав комиҫҫисене Ленин — Сталин ӗҫӗшӗн, социалисӑмла тӑван ҫӗршывӑн ӗҫӗшӗн хастарлӑн кӗрешме пултаракан ҫынсене кӗртмеле. Ҫакӑ вӑл суйлава ӑнӑҫулӑн иртерме кирлӗ тӗп условисенчен пӗри пулать. Пирӗн куҫта иртнӗ суйлав кампани вӑхӑтӗнче суйлав комиҫҫисене кандидатсем тӑратас ыйтӑва кун йӗркинчи чи йулашки ыйту вырӑнне лартса, халӑх пухуран тухса кайса пӗтес умӗн сӳтсе-йавма хӑтланнисем пулнине шута илмеле. Участкӑри суйлав комиҫҫи председателӗ, унӑн заместителӗ, комиҫҫи членӗсем суйлав кампани ответлӑ участкинче ӗҫленипе партипе совет руководителӗсен, кашни суйлавҫӑн асра тытмала. Иртнӗ суйлав кампани ҫакна лайӑх кӑтартса пачӗ: округри тата участкӑсенчи суйлав комиҫҫисем партипе совет влаҫӗ вӗсен умне лартнӑ задачӑна пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫленӗ ҫӗрте, суйлав кампанийӗ ӑнӑҫулӑ тата организацилӗ иртрӗ. РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлав кампанине ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет суйлавӗнчен тата лайӑхрах, тата организацилӗрех иртерес ӗҫре участкӑсенчи суйлав комиҫҫийӗсем пысӑк вырӑнта тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн партипе комсомол организацийӗсен тата профессилӗ сойузсемпе ӗҫҫыннисен общӗствисен суйлав комиҫҫинче ӗҫлеме кандидатсем тӑратасси ҫине пит те тимлӗн пӑхмала.

Халӑх тӑшманӗсем — троцкисла-бухаринла тата буржуалӑ националисла бандӑсем суйлав комиҫҫисене Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, совет влаҫӗ ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен йулташсене кӗртме чӑрмантарнӑ, чӑрмантараҫҫӗ те. Вӗсем суйлав комиҫҫийӗсем пысӑк вырӑнта тӑнине ӑнланса илсе суйлав комиҫҫисене „хӑйсен ҫыннисене" кӗртме хӑтланаҫҫӗ. Епӗр совет влаҫӗ пулнӑран вара 20 ҫул ытла пурӑнатпӑр, ССР Сойузӗн Верховнӑй Советне Сталинла Конституци тӑрӑх пысӑк ҫӗнтерӳсем тунипе иртертӗмӗр, коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗ историлӗ ҫӗнтерӳ турӗ. Епӗр тӑшмансене ҫӗнтерме вӗренсе ҫитнӗ. Ҫак опытпа усӑ курса партин кашни организацин, кашни коммунисӑн, профсойуз, комсомол, совет организацийӗсен тата кашни суйлавҫӑн революцилӗ сыхӑлӑхне ҫӳле ҫӗклесе, халӑх тӑшманӗсем суйлав кампанийӗпе хӑйсемшӗн усӑ курма хӑтланнине ҫапса аркатмала.

Партипе совет организацийӗсен, вӗсен руководителӗсен, парти Тӗп Комитечӗ тата Сталин йулташ организацилӗ ыйтура ҫынсене суйласа илме пӗлни тӗп вырӑнта тӑрать, кадрсем пур ӗҫе те татса параҫҫӗ, тесе кӑтартса панисене асра тытса ӗҫлемеле. Участкӑсенчи суйлав комиҫҫисенче ӗҫлеме Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, социалисӑм ӗҫӗшӗн пӗтӗм вӑй-хала парса ӗҫлекен совет патриочӗсене, партире тата партире тӑман большевиксене палӑртса РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне большевикла иртерер.

РСФСР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округсенчи Суйлав Комиҫҫисен составне ҫирӗплетесси ҫинчен

Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет президиумӗ йышӑннӑ ПОСТАНОВЛЕНИ

РСФСР Верховнӑй Советне суйламалли Положенин 37-мӗш, 38-мӗш, 39-мӗш статйисем тӑрӑх тата Пӗтӗм Российӑ Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет президиумӗ 1938 ҫулти апрелӗн 20-мӗшӗнче РСФСР Верховнӑй Советне суйламалли округсем ҫинчен йышӑннӑ постановлени тӑрӑх, Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет президиумӗ РСФСР Верховнӑй Советне Чӑваш АСС Республикӗнчен суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округсенчи Суйлав Комиҫҫисене общӗствӑлӑ организацисен тата ӗҫҫынни общӗствисен представителӗсен ҫак составӗпе ҫирӗплетме йышӑнать:

Шупашкар суйлав округӗ № 718

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗ **Харитонӑв** Варфоломей Тихӑнӑвич—Аслӑ шкулсемпе ӑслӑлӑх учрежденисен работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗн заместителӗ **Ижейӗв** Михаил Прокопйӗвич—Чӑвашполиграфтрестӑн Шупашкарти типографинчи рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи ҫекретарӗ **Федотӑв** Йакӑв Федотӑвич—Аслӑ шкулсемпе ӑслӑлӑх учрежденисен работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи членӗсем:

Александрӑв Федӑр Александрӑвич — Шупашкар районӗнчи коммунисла организацинчен,

Сперанский Михаил Тихӑнӑвич—Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Шупашкар районӗнчи организацинчен,

Федӗрӑв Ҫергей Федӑрӑвич—Шупашкар районӗнчи „Осоавиахим" колхоз колхозникӗсенчен,

Ҫергейӗва Йефимийа Йакӑвлӗвна — Тутаркас районӗнчи „Колос" колхоз колхозникӗсенчен,

Квасков Александр Николайӗвич — ССРС Оборонине тата авиацийе хими строителствине пулӑшакан общӗствӑн (Осоавиахимӑн) Тутаркас районӗнчи организацинчен,

Волкӑв Роман Михайлӑвич — Ишлей районӗнчи коммунисла организацинчен,

Филиппӑв Александр Ваҫилйӗвич — Шупашкарти „Водосвет" електростанцинчи рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен,

Оҫипӑва Йевдокийа Оҫипӑвна — Шупашкарти ҫпирт савӑтӗнчи рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен.

Ҫӗрпӳ суйлав округӗ № 719

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗ **Вишневский** Ҫемен Маркӑвич—Государствӑ учрежденисенчи работниксен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗн заместителӗ **Ҫеменӑв** Михаил Ҫеменӑвич—ССРС Оборонине тата авиацийе хими строителствине пулӑшакан общӗствӑн (Осоавиахимӑн) Ҫӗрпӳ районӗнчи организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи ҫекретарӗ **Шихматӑва** Нина Йегоровна—Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Ҫӗрпӳ районӗнчи организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи членӗсем:

Никитина Раиса Петровнӑ — Ҫӗрпӳ районӗнчи коммунисла организацинчен,

Федӑрӑвӑ Натальйа Федӑрӑвнӑ—Ҫӗрпӳ районӗнчи „Нива" колхоз колхозникӗсенчен,

Андрианӑва Анна Андрианӑвна—Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Куславкка районӗнчи организацинчен,

Никифӑрӑв Владимир Никифӑрӑвич — Куславкка комбинатӗнчи рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен,

Белов Александр Михайлӑвич—Государствӑ учрежденисен работниксен Профессилӗ Сойузӗн Куславкка районӗнчи организацинчен,

Морйаков Александр Алексейӗвич — Новинскинчи катка-пичке савӑтӗнчи рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен,

Чихина Клавдийа Иванӑвна — Нумай промыслалӑ кооперацин Чӑваш Сойузӗнчен,

Гаврилӑва Александра Гаврилӑвна — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Кӗҫӗн Ӑстакассинчи колхоз колхозникӗсенчен.

Ҫӗмӗрле суйлав округӗ № 720

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗ **Бобров** Николай Николайӗвич—Политикӑпа ҫутта кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен учрежденисенчи работниксен Профессилӗ Сойузӗн Ҫӗмӗрле районӗнчи организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗн заместителӗ **Коньухӑв** Петр Иванӑвич—Ҫӗмӗрлери „Большевик" савӑтри рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи ҫекретарӗ **Маслӑва** Анастаҫийа Ҫергейӗвна—Пуҫламӗш тата вӑтам шкул работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Ҫӗмӗрле районӗнчи организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи членӗсем:

Быватӑв Андрей Павлӑвич—Ҫӗмӗрлери „Большевик" савӑтри рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен,

Никитин Александр Никитич — ССРС Оборонине тата авиацийе хими строителствине пулӑшакан общӗствӑн (Осоавиахимӑн) Йетӗрне районӗнчи организацинчен,

Малов Дмитрий Иванӑвич—Государствӑ учрежденисенчи работниксен Профессилӗ Сойузӗн Йетӗрне районӗнчи организацинчен,

Йегорӑв Ҫергей Иванӑвич—Ҫӗмӗрлери йӑвӑҫ ӗҫлекен комбинатри рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен.

Баринӑв Михаил Ильйич—Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Чапайӗв йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсенчен,

Йуманкина Анна Йакӑвлӗвна—Вӑрҫӑлӑ турӑсӑрсен сойузӗн Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Советӗнчен,

Волкӑв Алексей Ваҫилйӗвич—Йетӗрнери ҫпирт савӑтӗнчи рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен,

Павлӑва Антонина Павлӑвна — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи коммунисла организацинчен.

Канаш суйлав округӗ № 721

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗ **Онучкин** Михаил Ваҫилйӗвич—Канаш районӗнчи коммунисла организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗн заместителӗ **Йакӑвлӗв** Иван Йакӑвлӗвич—Хусан чукунҫулӗн 5-мӗш дистанцин механически мастерскойӗсенчи рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсечен.

Округри Суйлав Комиҫҫи ҫекретарӗ **Корнилӑв** Ильйа Кусьмич — Канашри вакунсем йусакан савӑтри рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи членӗсем:

Федӑрӑв Дмитрий Федӑрӑвич —Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Вӑрмар районӗнчи организацинчен,

Иванова Акулинӑ Иванӑвна—Государствӑ учрежденисенчи работниксен Профессилӗ Сойузӗн Вӑрмар районӗнчи организацинчен,

Федӑрӑва Марийа Федӑрӑвна—Вӑрмарти спортинвентар хатӗрлекен рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен,

Александрӑв Иван Александрӑвич—Вӑрмар районӗнчи коммунисла организацинчен,

Ҫтепанӑва Йелизавета Ҫтепанӑвна—Канаш районӗнчи „Красное пламя" колхоз колхозникӗсенчен,

Ҫидӑрӑвӑ Марийа Ҫидӑрӑвна—Медицинӑпа санитари работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Шӑхасан районӗнчи организацинчен,

Захарӑв Иван Захарӑвич — Шӑхасан районӗнчи „Победа" колхоз колхозникӗсенчен,

Павлӑв Ваҫили Павлӑвич—Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Тӑвай районӗнчи организацинчен.

Улатӑр суйлав округӗ № 722

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗ **Йерышӗв** Антон Йевдокимӑвич—Политикӑпа ҫутӗҫ учреждени работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗн заместителӗ **Алексейӗв** Ҫтепан Иванӑвич—Улатӑрти пӑравуссем йусакан савӑтри рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи ҫекретарӗ **Агафонӑв** Йакӑв Константинӑвич —Пуҫламӗш тата вӑтам шкул работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Улатӑр районӗнчи организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи членӗсем:

Йармуш Владислав Антонӑвич—Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Улатӑр районӗнчи организацинчен,

Милашина Анастаҫийа Дмитрийевна—Улатӑрти 8-мӗш №-лӗ вӑрман савӑтӗнчи рабочисемпе служӑшчисенчен тата инженерсенчен,

Маркин Андрей Иванӑвич—Улатӑр районӗнчи „Стахановец" колхоз колхозникӗсенчен,

Бельантикӑв Михаил Тимофейӗвич — Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Пӑрачкав районӗнчи организацинчен,

Йефимӑв Николай Федӑрӑвич—Пӑрачкав районӗнчи Илйич йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсенчен,

Матвейӗв Ваҫилий Иванӑвич — Кувакинӑ районӗнчи „Пролетарий" колхоз колхозникӗсенчен,

Горелӑв Иван Дмитрийӗвич—Кувакинӑ районӗнчи коммунисла организацинчен,

Йефремӑв Александр Йефремӑвич — Йӗпреҫ районӗнчи „Красный партизан" колхоз колхозникӗсенчен.

Патӑрйел суйлав округӗ № 723

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗ **Ҫтепанӑв** Филип Ҫтепанӑвич—Государствӑ учрежденисенчи работниксен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗн заместителӗ **Каштанӑва** Ольга Филипӑвна—Патӑрйел районӗнчи Сталин йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсенчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи ҫекретарӗ **Акчурин** Корнили Александрӑвич — Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Патӑрйел районӗнчи организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи членӗсем:

Йакӑвлӗв Гаврил Йакӑвлӗвич—Турхан районӗнчи „Октябрь" колхоз колхозникӗсенчен,

Михайлӑв Петр Михайлӑвич—Пуҫламӗш тата вӑтам шкул работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Турхан районӗнчи организацинчен,

Кудрӑв Йефим Николайӗвич — ССРС Оборонине тата авиацийе хими строителствине пулӑшакан общӗствӑн (Осоавиахимӑн) Йелчӗк районӗнчи организацинчен,

Бутанӑв Николай Александрӑвич — Шӑмӑршӑ районӗнчи коммунисла организацинчен,

Тарасӑв Ваҫилий Павлӑвич—Шӑмӑршӑ районӗнчи „Труженик" колхоз колхозникӗсенчен,

Иматдинӑв Сабирзйан Иматдинӑвич—Вӑрҫӑлӑ турӑсӑрсен Сойузӗн Шӑнкӑртам районӗнчи советӗнчен,

Йараханӑв Шайхаттар Алиуллӑвич — Государствӑ учрежденисенчи работниксен Профессилӗ Сойузӗн Шӑнкӑртам районӗнчи организацинчен,

Наумӑв Петр Иванӑвич—Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Йӗпреҫ районӗнчи организацинчен.

Вӑрнар суйлав округӗ № 724

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗ **Дубинин** Дмитрий Федотӑвич — Аслӑ шкулсемпе ӑслӑлӑх учрежденисен работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗн заместителӗ **Федӑрӑв** Дмитрий Федӑрӑвич—Пуҫламӗш тата вӑтам шкул работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Вӑрнар районӗнчи организацинчен.

Округри Суйлав комиҫҫи ҫекретарӗ **Бакров** Виктӑр Николайӗвич—Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Вӑрнар районӗнчи организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи членӗсем:

Мишаков Григорий Изосимӑвич—Вӑрнар МТС рабочисемпе служӑшчисенчен,

Виноградӑва Йефимийа Борисӑвна — Государствӑ учрежденисенчи работниксен Профессилӗ Сойузӗн Вӑрнар районӗнчи организацинчен,

Йефремӑв Петр Йефремӑвич—Трак районӗнчи „Йанмурзинӑ" колхоз колхозникӗсенчен,

Александрӑва Александра Александрӑвна—Трак районӗнчи „Малала" колхоз колхозникӗсенчен,

Дубинин Ҫтепан Ваҫилйӗвич — Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Елӗк районӗнчи организацинчен.

Константинӑв Павел Константинӑвич—Елӗк районӗнчи коммунисла организацинчен,

Йефимӑв Михаил Йефимӑвич — ССРС Оборонине тата авиацийе хими строителствине пулӑшакан общӗствӑн (Осоавиахимӑн) Трак районӗнчи организацинчен,

Патрикӑв Александр Тихӑнӑвич—Елӗк районӗнчи Жданӑв йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсенчен.

Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет председателӗ З. АНДРЕЙЕВА.

Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет ҫекретарӗ Т. ВАСИЛЙЕВ.

Шупашкар хули,
1938 ҫулхи апрелӗн 29-мӗш.

Производствӑлӑ ҫӗкленӳ

ПАТӐРЙЕЛ, апрелӗн 28-мӗш. (Телефон тӑрӑх). Районри колхозсенче РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли кун ҫинчен йышӑннине тата парти Тӗп Комитечӗпе ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ „Колхозниксене колхозран кӑларма чарасси ҫинчен", „Колхозсенче гупӑшсене тӗрӗс мар валеҫни ҫинчен", „Йединоличниксен хуҫалӑхӗсем ҫине хунӑ налогсемпе ытти обйазателствӑсем ҫинчен" йышӑннӑ постановленисене хӗрӳллӗн кӗтсе илчӗҫ. Халӗ кашни колхозрах митингсем пулса иртеҫҫӗ. „Коммунар", „Победа" колхозникӗсем митингра йышӑннӑ резольуцире:

— Епӗр суйлав кунне—ийунӗн 26-мӗшне—пур ӗҫре те ҫитенӳсем тунипе кӗтсе илетпӗр. Коммунистсемпе партире тӑманнисен блокне татах та ҫирӗплететпӗр, теҫҫӗ.

Нӗркеҫри суйлавҫӑсем:

— Епӗр ҫитес суйлава тата лайӑхрах хатӗрленетпӗр. Коммунистсемпе партире тӑманнисен блокне ҫирӗплетсе пыратпӑр. Хамӑр сасӑсене Ленин—Сталин парти ӗҫне чӗререн парӑннӑ ҫынсемшӗн паратпӑр,—теҫҫӗ.

Партипе правителствӑ постановленийӗсем колхозниксен ака ӗҫӗнчи хастарлӑхне ҫӗклентерсе йачӗҫ. „Роза Люксембург" колхоз членӗсем хӑйсен митингӗнче ҫураки не 7 кун хушшинче пӗтерме сӑмах пачӗҫ. „Трактӑр" колхозри суха тӑвакан Петров 1,5 гектар вырӑнне 1,8 гектар сухалама пулчӗ. В. Андрейӗв кунне 5 гектар вырӑнне 7,5 гектар акать. „Хӗрлӗ Туҫа" колхозра кунне 7-шер гектар, Кирӑв йачӗпе тӑракан колхозра 9-шер гектар акса пыраҫҫӗ.

Н. П.

Тельмана ҫӑлса кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитет чӗнсе калани

ПАРИЖ, апрелӗн 28-мӗш (ТАСС). Тельмана ҫӑлса кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитет пӗтӗм тӗнчери рабочи клас патне чӗнсе каланине пичетлесе кӑларнӑ. Унта майӑн 1-мӗшӗнчи демонстрацире Тельмана ирӗке кӑларас кӗрешӗве, ҫавӑн пекех тата фашисӑма хирӗҫ кӗрешнӗшӗн тӗрмесене хупнисене ирӗке кӑларас кӗрешӗве вӑйлатма хушса чӗнсе каланӑ.

Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округсенчи Суйлав Комиҫҫисен составне ҫирӗплетесси ҫинчен

Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет президиумӗ йышӑннӑ ПОСТАНОВЛЕНИ

„Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйламалли Положенин" 36-мӗшпе 37-мӗш тата 38-мӗш статйисем тӑрӑх, Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет президиумӗ Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиҫҫисен составне ҫирӗплетнӗ.

Шупашкар хули тӑрӑх округсенчи суйлав комиҫҫисене общӗствӑлӑ организацисен тата ӗҫҫынни общӗствисен ҫак представителӗсенчен ҫирӗплетме йышӑннӑ:

Шупашкар хула суйлав округӗ № 1

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗ **Никифӑрӑв** Андрей Никифӑрӑвич—Центрти тата Кӑнтӑрти полиграфи промышлӗннӑҫ рабочисен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗн заместителӗ **Филиппӑв** Николай Иванӑвич—Центрти Потребител Коопераци работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи ҫекретарӗ **Потапӑв** Григорий Иванович—Аслӑ шкулсенме ӑслӑлӑх учреждени работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи членӗсем:

Константинӑв Ваҫили Константинӑвич—Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗн Шупашкар хула организацинчен,

Воронӑв Александр Алинархович—Медицинӑпа санитари ӗҫӗн работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен,

Сидӑрӑвӑ Зойӑ Иванӑвна—Шупашкарти Водопйанӑв йачӗпе тӑракан тир-сӑран савӑт рабочисенчен, служӑшчисенчен тата инженерсенчен,

Пегайӗвӑ Марфа Йевдокимӑвнӑ—Шупашкар хулинчи коммунисла организацинчен,

Бронникӑв Ҫергей Александрович—Нумай промысла кооперацин Чӑваш республикинчи сойузӗнчен,

Орловӑ Анисийа Иванӑвнӑ — Государствӑ суту-илӳ работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Шупашкар хула суйлав округӗ № 2

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗ **Ваҫилйӗв** Артемий Ваҫилйӗвич—Пичет работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи председателӗн заместителӗ **Круглов** Павел Иванӑвич—Шупашкар хулинчи коммунисла организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫин ҫекретарӗ **Дмитрийӗвӑ** Александра Георгийӗвнӑ—Пуҫламӗш тата вӑтам шкул работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиҫҫи членӗсем:

Баранӑв Константин Михайлӑвич—Политикӑпа ҫутӗҫ учреждени работникӗсен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен,

Йемелйанӑв Александр Йемелйанӑвич — пурӑнмалли ҫуртйӗрпе коммуналлӑ строителствӑ рабочисен Профессилӗ Сойузӗн Чӑваш организацинчен,

(Малалли 2-мӗш страницӑра).

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççисен составне çирĕплетесси çинчен

ЧАССР Тĕпĕçтăвком президиумĕ йышăннă постановлени

(ЙУЛАШКИ).

Стољаров Çергей Константинăвич—Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕн Шупашкар хула организацинчен,

Кириллăв Иван Трофимăвич—Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăт рабочисенчен, служăшчисенчен тата инженерсенчен,

Васçилйĕвă Татйанă Васçилйĕвнă—ССРС Оборонине тата авиаципе хими строителствине пулăшакан общчĕствăн (Осоавиахимăн) Шупашкар хулинчи организацинчен.

Кузнецов Игнатий Максимăвич—Медицинăпа санитари ĕçĕн работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Шупашкар хула суйлав округĕ № 3

Округри Суйлав Комиççи председателĕ **Матăчкин** Иван Степанăвич—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацинчен.

Округри Суйлав Комиççи председателĕн заместителĕ **Светлов** Илйа Дмитрийĕвич — Çĕрĕç оргăнĕсен работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиççи секретарĕ **Леонтйĕв** Никандр Леонтйĕвич—Аслă шкулсемпе ăслăлăх учреждени работникĕсен Профеççилĕ Сойузĕн Чăваш организацинчен.

Округри Суйлав Комиççи членĕсем:

Скачковă Пелагейă Мартынăвнă — Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕн Шупашкар хула организацинчен,

Арсентйĕвă Софийă Григорйĕвнă—ССРС Оборонине тата авиаципе хими строителствине пулăшакан общчĕствăн (Осоавиахимăн) Шупашкар хула организацинчен,

Чечнев Васçилий Алексейĕвич—Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим“ колхоз колхозникĕсенчен,

Епифанăв Иван Василйĕвич—Шупашкар районĕнчи „14 лет Октября“ колхоз колхозникĕсенчен,

Григорйĕв Çергей Алексейĕвич — Шупашкарти „Водосвет“ електростанцинчи рабочисенчен, служăшчисенчен тата инженерсенчен,

Кустов Андрей Федăрăвич—Садвинтрестăн Шупашкарти совхозĕнчи рабочисенчен тата служăшчисенчен.

Округри суйлав комиççи членĕ пулма Йусупăвă йулташа палăртрĕç

КУСЛАВККА. Апрелĕн 28-мĕш. (Телефон тăрăх, хамăр корр.).

Апрелĕн 27-мĕшĕнче Кармăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Колхозниксем çак пухура Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕрлемес суйлав округĕн комиççи членĕ пулма Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз членне Йусупăвă Хадычйа йулташа палăртрĕç.

Йусупăвă йулташ колхозри парторг. Совет тата колхоз ĕçĕсенче нумай çул хушши ĕçленĕ. ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра агитаципе массăлă ĕçсенче хăйĕн пултарулăхне кăтартса панă.

Кармăш йалсоветĕнчи ĕççынниcем РСФСР тата ЧАССР Тĕпĕçтăвкомĕсем суйлав кунĕ çинчен пĕлтернине хаваслăн кĕтсе илчĕç. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав Положенийĕсемпе Конституцине вĕрентес тĕлĕшпе йалта 25 агитатăр ĕçлет. Ĕнер йалсовечĕ агитатăрсемпе çеминар туса иртерчĕ. Коммуниссемпе комсомолĕц агитатăрсем хăйсен ĕçĕсене бригадăсенче, уйра туса пыраççĕ. Пайан кашни бригадăрах çтена хаçачĕсем тухнă.

М. Митрофанăв.

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнеççĕ

ÇĔРПУ. Апрелĕн 26-мĕшĕ. (Телефон тăрăх). Районри рабочисем, колхозниксемпе колхозницăсем тата совет интеллигенцийĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ пуçланнине çав тери пысăк çĕкленӳпе, савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Апрелĕн 25-мĕшĕнче Çĕрпӳ хулинчи ĕççыннисен пысăк митингĕ пулчĕ. Кунта 2 пин çын ытла пухăнчĕç.

Хулари ĕççынни хĕрарăмĕсен йачĕпе Софонăвă, Софронăвă тата ытти йулташсем те тухса каларĕç. Вĕсем суйлав кампани пуçланнине ĕççыннисем питĕ кăмăллăн кĕтсе илни çинчен калаcа пачĕç. Хайсен сăмахĕсенче хулари мĕн пур ĕççыннисене суйлав кампанинче херӳлĕн хутшăнса ĕçлеме, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче пĕр шухăшлă пулса, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнчĕç.

Хале районри пур колхозсенче, бригадăсенче массăлă-ăнлантарулă ĕçсене вăйлăн туса пыма тытăннă. Уйра ĕçлекен колхозниксене Сталинла Конституципе РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене ăнлантарса параççĕ. Колхозсем ака ĕçне пысăк пахалăхпа тата кĕске срукра ирттерме, вăйлă тырпул туса илессине пурнăçлама тата государствă умĕнчи парăмсене вăхăтра пурнăçласа пыма татăклă обйазателствăсем илеççĕ.

Районра РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççисен членĕсене суйлама кандидатсем тăратас ĕçе тытăннă.

ПСК(б)П райкомĕн çекретарĕ **Ф. Цветков.**

1938 ÇУЛХИ ÇУРАКИ

Малтанхи кунсенче

ТРАК, 28-IV.(Телефонпа, хамăр корр.). Апрелĕн 26-мĕш тĕлне районри 100 колхозран 98 колхоз çуракипе тухрĕç. Çурхи акана Чадуккасси йалсоветĕнчи „Çĕнĕ ĕç“ тата Ÿсек йалсоветĕнчи „Красный пахарь“ колхозсем тухман. Кунта мăнкуна уйавлас йăлана хирĕç тивĕçлĕ кĕрешӳ çук-ха.

Çуракин малтанхи кунĕсенче чылай çитменлĕхсем палăрчĕç. Тиһçырма йалсоветĕнчи „Пахарь“, „Буксир“ тата Димитров йачĕпе тăракан колхозсем, Мăн Шетмĕ йалсоветĕнчи „Хĕрлĕ Шетмĕ“ колхоз вăрлăхсене йаровизацилес плана пурнăçа кĕртмесĕр хăвараççĕ. Вăл колхозсенче вăрлăха мĕн пурĕ те 10—15 процент кăна йаровизациленĕ. Йаровизацилемен тата шывпа йĕпетнĕ вăрлăхсене акаççĕ, çапла майпа вăрлăха йаровизациленĕ пек кăтартаççĕ. Витнĕ итемсемпе вăрлăхсене йаровизацилес ĕçре усă курмаççĕ, çав вăхăтрах вăрлăха йаровизациleме помешчени çук тесе лараççĕ. Нумай колхозсем нитрагин тата ытти азотлă удобренисене кӳрсе килмен. Бригадăсенче звеносем туман, вĕсенче социалисăмла ăмăртăва сарса йаман. Тăпра нӳрĕрех тесе, нумай колхозсенче çейалкăсемпе усă курмаççĕ.

Кĕрхи тырă калчисене апат парассине мĕн пурĕ те 26—30 процент кăна тултарнă.

Чылай колхозсенче клевĕр вăрлăхĕсем çитмеççĕ (Мартынкасси), çав вăхăтрах ытти колхозсенче вăрлăх ытлашшипех те пур.

МТС трактăрсене çителĕклĕ лайăх йуcаса хатĕрленĕ. Анчах, унта организацилĕ çитменлĕхсем пурри палăрчĕ. Малтанхи кунах икĕ трактăр сăлтавсăрах ĕçсĕр тăчĕç. Трактăрсем вађђи лампăсем çук пирки, вĕсем çĕрлехи вăхăтсенче ĕçлемеççĕ. Трактăрсен ĕçне шута илессине йĕркелесе йаман, çавăнпа вĕсем кашни кун мĕн чухлĕ ĕçленине пĕлмеççĕ. МТС трактăриссене пĕлтĕрхи ĕçсемшĕн 10.500 тенкĕ ĕç укçи тӳлесе татман. Вĕсем хушшинче социалисăмла ăмăртăва тивĕçлипе организацилемен.

Халђхи вăхăтра уйрăмăнах хĕрарăмсен трактăр бригади аван ĕçлет.

Çӳлте асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе парти райкомĕ тата ытти районри организацисем йалсене пулăшас ĕçе организацилеççĕ.

Агротехникăла ĕçсен пахалăхĕшĕн кĕрешмеççĕ

КАНАШ. Районра малта пыракан Сиккасси Аксарино, Йуманзар, Иангилчăри колхозсем чи малтан акана тухрĕç. Ку колхозсенче пахалăх комиççисем çĕр пиçсе çитнине сăнасах тăнă. Вĕсем акмали вăрлăхсене пĕтĕмпех суртласа йаровизациленĕ. Çак асăннă колхозсенчи колхозниксем вăйлăран та вăйлă тырпулă туса илессишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешеççĕ.

Анчах, çав хушăрах иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе лăпланса ĕçлекен колхозсем те сахал мар-ха.

„Хĕрлĕ йалав“ колхоз председателĕ Илйина йулташ колхоз ĕçне начар йертсе пынине пула, акмали вăрлăхсене çителĕклĕ таран суртламан, йаровизацилесе çитермен. Илйина йулташ колхозниксем тунă ĕçсене тĕрĕслемест. Суха тăвакан колхозниксем агротехникăна пăсса 7—8 сантиметр тарăнĕш çеç сухаланă. Ĕç лашисене ĕçрен таврăннă хыççăн, тăратмали пӳлĕмсем çĕмĕрелсе пĕтнĕ пирки, майĕсенчен веренпе кăкарса тăратаççĕ.

Çавнашкалах Кармамейаври Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозан председателĕ те çуракине кĕске срукра ирттерессишĕн тăрăшмаст. Вăл кашни кулленех ерех ĕçсе çӳрет. Трактăрсем ĕçленĕ çĕре шывсем турттарса памаççĕ, трактăриссене тăрантармаççĕ. Максимăв йертсе пыракан 5-мĕш бригадăра лаша кӳлмели таврашсем пайанхи куна çитсе те йусавлă мар.

Пикших йалĕнчи колхозра акмали вăрлăхсене суртламасăрах акаççĕ. Варлăхсене йаровизацилессипе вутпуççирен тасатасси çинчен шутламаççĕ те.

Кунта çĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксем çураки вăхăтĕнче йертсе пырас выранне телефон тăрăх çеç сведенисем пухса лараççĕ.

Районра пурĕ 47 колхоз, вĕсенчен апрелĕн 26-мĕшне 32 колхоз çеç суха тума тухнă. Вĕсем те 3—4 кун хушшинче 200 гектар ытларах кăна сухаланă.

Районри колхозсенче акмали вăрлăхсене 3 пин центнĕр ытларах йаровизацилемеле пулнă пулсан, 1856 центнĕр çеç йаровизациленĕ. Кĕрхи калчасене 1600 гектар çинче апат парса хăвармала пулнă, пайанхи куна 922 гектар ытларах çеç апат панă.

Районĕпе пур тĕрлĕ кулђтурăсене акма 14412 центнĕр вăрлăх суртламала, пайанхи куна çитсе 14147 центнĕр çеç суртланă. Çавнашкалах суртлă вăрлăх улăштарас плана та тултарман.

Районăн кайа йулса ĕçлеме нимĕнле сăлтав та çук. Паллах, Канаш районĕ çапла ĕçлесе пырсан, ăмăртакан Йелчĕк районĕнчен кайа йуласси куç умĕнчех.

Н. Михейĕв.

Пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ

ТУРХАН. Липăвкăри Ленин йачĕпе тăракан ертел май уйавне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет. Струшкă цехĕнчи рабочисем пуçарнипе цехсенче стаханăвла çурийăхлăх организациленĕ. Çурийăхлăхăн малтанхи кунĕнче К. Федăрăв çмени нормăна 127,3 процент, И. Макарăв çмени—137 проц., М. Воробйов çмени—118 проц. тултарчĕç. Май уйавĕнче стаханăвĕцсене премипама ертел правленийĕ 1.000 тенкĕ укçа уйăрчĕ.

Рабочисем хушшинче РСФС Республикĕпе Чăваш АССР Конституцийĕсене тата Верховнăй Советсене суйламали Положенисене вĕренмели кружок организациленĕ. Кружока 100 рабочи ытла çӳрет.

Уйав кун комсомолĕцсем спектакљ лартса параççĕ, духовой тата струнлă оркестрсем çĕнĕ йурăсем вылђаса кăтартаççĕ.

И. Архипăв.

ТЕАТР

„КИМ ПĂШАЛĔ“

Чăвашсен государствă ача-пăча театăрĕ епрелĕн 18-мĕшĕнче В. Потомкинă çырнă „Ким пăшалĕ“ йатлă вырăсла пйесăна лартса пачĕ.

Пйесă çамрăк пионерсем тăван совет çĕршывне сыхлас ĕçре хĕрлĕ пограничниксене активлă пулăшнине кăтартса парать.

Пйесăри ĕç хĕвелтухăçĕнче—совет чиккинче пулса иртет. Çамрăк пионер Кимăн ашшĕне, Цой колхознике, Йапони шпионĕ вĕлерет.

Тăшманăн çак ирсĕр ĕçĕ Ким пионера пит тарăхтарса йарать.Вăл тăван çĕршывăн çамрăк патриочĕ, хăвăртрах пограничник пуласшăн пулса Блђухĕр йулташ патне çыру çырать.

Пĕрре вăл Таңђăпа пĕрле шкултан таврăннă чухне тайгара Высоких шпионпа Йапони офицерне тĕл пулать. Ким Высоких аллинчи пăшал çинче хăй тунă палăна асăрхать. Ку пăшал ашшĕне вĕлернĕ кас çухалнă. Халĕ вăл ашшĕне кам вĕлернине аванах ăнланса илет.

Ким шпионсем хыççăн йĕрлесе кайать. Таңђă пĕччени йулать. Хĕрлĕ пограничниксем чупса тухаççĕ. Вĕсем халĕ çеç чикĕ урлă каçнă шпионсене, диверсантсене йĕрлеççĕ. Малтанах Таңђă нимĕн те чĕнеймест. Таңђă—Высоких хĕрĕ. Ăна питĕ йавăр. Тăван ашшĕ—диверсант. Çук, Таңђă чăтаймасть, хĕрлĕ пограничниксене шпионсем кĕрсе кайнă çула кăтартса йарать.

Ким шпионсене хăвалаcа çитет. Шпионсем ăна вĕлерме канаш тăваççĕ. Анчах Ким хăрамасть, тăшмансемпе паттăрăн кĕрешет. Хĕрлĕ пограничниксем чупса çитеççĕ. Вĕсем шпионсене арĕслесе чикĕри заставăна илсе кайаççĕ. Ким савăнать: вăл тăван çĕршыва пысăк усă кӳчĕ.

Пйесăна ăнланма çăмăл, сценăсене аван йĕркеленĕ. Пйесăна лартăшса ĕçлени палăрать. Сценăсене килĕшӳлĕ илемлетнĕ. Уншăн А. М. Тогайĕв художнике тав тумала.

Пĕр-ик сăмах пйесăри ролђсене выљакансем çинчен. Маштанăвă (Ким), Орешникăвă (Таңђă), Осипăв (Высоких) тата Куçмин (Лугин пограничник) артиссем лайăх выљанă палăрчĕ. Уйрăмăнах Маштанăвă артисткă çивĕчĕ, паттăр Ким пионер ролђне аван кăларчĕ. Никитин артис Йапони офицерĕ Йамамото ролђне ытла кулмала туни вырăнлă мар. Илйин Цой ролђне туса çитереймен, Цой—активлă колхозник, йалсовет председателĕ, унăн сăн-сăпатне туллирех кăтартмалла пулнă. Çак çитменлĕхсене малашнехи постановкăсенче пĕтермелле.

Ку пйесăна ача-пăча театрĕнче лартни усăлă. Вăл ачасене тăван çĕршыва чунтан йуратма вĕрентет.

Ф. Кошкин.

КĔСКЕН

▪▪ 38 çын вĕренсе тухрĕç. Шетмĕре (Турхан р.) апрел уйăхĕнче хут пĕлменнисем 38 çын шкултан вĕренсе тухрĕç.

П. Лазăрĕв.

▪▪ ЙĔПРЕÇ. Хурамал, Клешкасси, Чăрăшкасси йалĕсенче трахом чирĕпе кĕрешес ĕçе лайăх организациленĕ. Трахработниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Хурамалти Арçентйĕв фелђдшĕр çав йалсенче трахомпа чирленисене тĕрĕслесе тухнă. Виçĕ йалта трахом чирĕнчен 286 çын сывалнине палăртнă.

▪▪ ЙЕТĔРНЕ. Хучашри çитĕннисен шкулĕнче 35 çын вĕренеççĕ. Вĕсене Прокопйĕвпа Суворăв комсомолĕцсем вĕрентеççĕ. Суворăв йултша ачалă хĕрарăмсем патне килĕсене кайса вĕрентет.

★ **Ĕçре çитĕннĕ работниксене ответлă вырăнсене.** Канашри суд тата прокуратурă оргăнĕ ĕçре ӳснĕ работниксене ответлă вырăнсене куçарса пырать.

Тимаков судисполнителе районри прокурор помшникне лартнă. Ăна судисполнителте виçĕ çул хушши лайăх пример парса ĕçленĕшĕн велосипедпа премиленĕ.

Каликовă йалĕнче прокуратурăна пулăшакан бригадă членĕ пулнă Никитин йулташа судисполнителе лартнă. Никитин прокуратурăна пысăк пулăшусем панă.

А .Степанăв.

★ **Оборонă значокĕсен нормисене панă.** Шупашкарти педрабфакра вĕренекенсем май уйавне хатĕрленсе 12 студент Ворошилăв пек тĕл перекенсен, 24 çын — ПВХО, 45 çын ГСО тата 5 çын ГТО значокĕсен нормисене панă.

П. Гаврилăв.

Шахмăт турнирĕ

Улатăрти чукунçул ĕçне вĕренмелли комбинатра шашкăпа шахмăт турнирĕ пулса иртрĕ.

Шашкăпа—пĕрремĕш вырăна 3-мĕш курса вĕренекен Чернов, иккĕмĕш вырăна 2-мĕш курсра вĕренекен Никитин, виççĕмĕш вырăна 1-мĕш курсра вĕренекен Федотăв йышăнчĕç.

Шахмăтпа—пĕрремĕш вырăна 4-мĕш курсра вĕренекен Мйаçников, иккĕмĕш вырăна 4-мĕш курсра вĕренекен Алексейĕв, виççĕмĕмĕш вырăна 3-мĕш курсра вĕренекен Васçилйĕв йышăнчĕç.

Г. Шмелев.

Йалти столовăй

Йадрино йалĕнче (Йетĕрне районĕ) çак кунсенче çĕнĕ столовăй уçрĕç. Столовăй пысăк та çутă. Унта кашни кун 90—100 çын апатланать.

П. Краснов.

Пулни-иртнисем

** Шупашкарти кирпĕч савăтĕнче счетовод пулса ĕçленĕ Л. П. Порфирйĕв (Трак районĕнчи Чканар йалĕсем) П. Николайĕв хватерне кĕрсе, 500 тенкĕлĕх тăхăнмали йапаласем варласа кайнă. Унччен малтан вăл кирпĕч савăтĕнчи Долонинă кассиршăн портфĕлĕнчен 210 тенкĕ укçа вăрланă пулнă. Порфирйĕва арĕсленĕ.

** Апрелĕн 22-мĕшĕнче Шупашкарта А. М. Крошечкин-Строков хушаматлă спекуљанта тытнă. Вăл хулари магазинсенче дефицитлă промтаварсем илсе, вĕсене кайран хаклă хакпа пасарта сутса, услам туса пуранна. Ăна тытсан, унран 16 мăшăр ботинкă, 3 мăшăр калуш, нумай манфактурă тата 800 тенкĕ укçа туртса илнĕ. Вăл ниçта та ĕçлемесĕр спекуљаци туса çеç пурăннă. Спекуљанта суда панă.

Митта Петĕрĕ

АКАРА

Сухаланă хыççăн илемлĕн сӳреленсе йулнă кăпăшка тăпрала анасем çинчен куçĕсене илчĕ те Сахрун мучи, чĕлĕмне мăкăрлантарнă май, Тарук çине пăхрĕ:

— Вара, итле-ха, хĕрĕм. Пирĕн план пăсăлать вĕт?

Ку сăмахĕсене вăл кăшт тытăнчăклăрах, кулăшларах каларĕ. Ăна çапах ăнланчĕç. Тарук та, ытти сухалакансем те ун çине пĕр харăссăн пăхса, пĕр харăссăн ыйту пачĕç:

— Мĕншĕн пăсăлать?

— Вара, хамăрах пăсатпăр. План тăрăх ака ĕçне сакăр кун тума пăхнăччĕ те, халĕ ак, ыранах пĕтерес тесе шутлатпăр. Ултă кунрах пĕтеретпĕр пулать иккен те.

Ăна хирĕç нимĕнех те каламарĕç. Савăнăçлă кулăпа çеç ответлерĕç. Калама кирлех те мар иккенне Сахрун мучи хăй те лайăх ăнланать. План „пăсăлнăшăн“ ахаљ çеç пăшăрханать вăл, тĕрĕссипе — уншăн савăнать. Час-часах мухтанса та илет.

— Ну, йурĕ,—терĕ Сахрун. — Капу минучĕ пĕтрĕ пуљ. Айтăр, атсемĕр. Сухалар. Пăсăлнă-тăк, пăсăлнă ĕнтĕ план. Ыран пурпĕрех вăл плана тултаратпăр.

Каллех кулă. Савăнăçлă калаçу. Ытла та аванçке усă уйра кула-кула, йурлайурла ака тума. Акă, паçăртанпа пуçĕсене ухса тăракан мăнтăркка лашасем вырăнтан тапранчĕç. Вĕсене кӳлнĕ çутă каслă акапуçĕсем кустăрмисене йĕрĕлче пек çавăртарса малала шăвăнчĕç. Сухалакансем çине, агротехникă хушнă пек килĕшӳлĕн çавăртарнă май сухаланса йĕркеленекен йĕрсем çине пĕтĕм кăмăлтан, çак хура та кăпăшка тăпралă аслă уйăн аслă хуçи пек, мăнаçлăн пăхса йулчĕ Тарук.

Тарук, кăвак пĕлĕт йевĕр тăрă куçсемлĕ те çирĕп шăмшаклăскер, нумайах та пулмасть колхозра звеновод пулса ĕçлетчĕ. Унăн звенине иртнĕ çулхине стахапăвла звено тесе йат панă. Йалхуçалăхĕнче малта пыракансен республĕкри слђотĕнче те пулнă Тарук. Тăван республиксемпе тунă социалисăмлă ăмăрту договăрĕшĕн чунтан-чĕререн хавхаланса алă çĕкленĕ.

— Пирĕн умра тăракан тĕп ыйту — кăçалхи çул стаханăвла звенорап стаханăвла бригадă тăвасси! — тенĕ Тарук, слђотран таврăннă хыççăн колхозниксен умĕнче отчот тунă чухне. — Ку ыйтăва ăнăçлăн пурнăçлама пур условисем те çителĕклĕ пирĕн.

Тарукпа пурте килĕшнĕ. Ăна бригадир туса хунă. Халĕ вăл—стаханăвла бригадăна йертсе пыраканĕ. Тарук ĕçшĕн мĕн пур вăйне хурать. Ĕçе йуратать вăл, ĕçшĕн çунать. Çав вăхăтрах хăйĕн ĕçĕсене, бригадă ĕçĕсене шута илме, кунсеренех хут çине паллă туса пыма тăрăшать. Акă унăн дневникĕн хăшпĕр сыпăкĕсем:

Апрелĕн 23-мĕшĕ. Уйа тухрăмăр пайан. Тăпрана ывçă çине илсе тĕпретсе пăхрăм та: урăх кĕтме кирлĕ мар, ыранах сухалама тытăнар, терĕм. Маншала пурте килĕшрĕç. .Сахрун мучи çеç: „Ыран мăнкун вĕт-ха, е-е, атсемĕр?“—тесе ыйтрĕ. Пурте кулаççĕ. Сахрун мучи хăй те кулать. Кулчĕ-кулчĕ те вăл: „Йурать вара, тытăнăпăр акма, хатĕрлĕх çитнĕ“ тесе хучĕ. Пурсăмăр та пĕр шухăшлă пулса таврăнтăмăр уйран. Клуб умĕнчен иртнĕ чух пысăк саспаллисемпе çырнă пĕлтерӳ куртăмăр. Кĕçĕр—„Христос пулнă-и?“ йатлă темăпа доклад, тесе çырнă унта. „Килее-ха апла, килее итлес“,—мăкăртатрĕ Сахрун.

Кăнтăрла иртсен правленинче ака умĕнхи лару туса ирттертĕмĕр.

Апрелĕн 24-мĕшĕ. Колхозлă йал шуçăмран та иртерех вăранчĕ. Манăн бригадăн ака тунă çĕрте ĕçлеме палăртнă членĕсем манран та маларах вите патне çитнĕ. Лашасене тытса тухнă вĕсем, кӳлсе те хунă. Уйа тухса, хамăрăн çĕр участки çине çитнĕ-çитменех: „Еп малтан!—терĕ Сахрун.—Малтан хам сухалама пуçлатăп“.

Унпала хирĕçмерĕмĕр епĕр. Суха пуçлама ирĕк патăмăр. Сахрун мучи кирек мĕнле ĕçе те хăй малтан пуçласа йарасшăн кĕрешни тĕлĕнтермест пире пĕрре те. Хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ епĕр ăна. Унăн кăмăлне пĕлетпĕр. Пĕркунхине те çапла, ССРС Верховнăй Советне суйланă вăхăтра, ирхине 5 сехетрех суйлав участкине чупса пынă. (Епĕ ун чух хамăр йалти суйлав комиççин членĕ пулса ĕçлеттĕм). Пынă та Сахрун мучи: „Мĕнле-ха капла, мĕншĕн-ха халех килнĕ есĕр, 6 сехетре çеç пуçланать вĕт?“—тет вăл, хăйĕнчен те иртерех çитсе тăнă суйлавçăсем çине пăхса. „Есĕ ху мĕншĕн халех килнĕ татаа?—терĕçĕ ăна.—Пĕлетпĕр сана, есĕ ху пуринчен малтан сасă парасшăн калаçатăн-ха ĕнерех“. „Тĕрĕс калатăр, питĕ тĕрĕс,—ответлерĕ Сахрун. —Епĕ чи малтан пуçласа сасăлатăп“. Унпала килĕшрĕç. Комиççи председателĕ суйлав пуçланни çинчен йевитлесенех, чи малтан бӳллетенсемпе конверт Сахрун мучи илчĕ. Коммуниссемпе партире тăманнисем тăратнă кандидатсемшĕн пирĕн йалти суйлавçăсенчен чи малтан Сахрун мучи сас пачĕ. Унпала сахал мар хĕпĕртесе çӳрерĕ вара вăл кайран та.

Акă, акапуçне майлаштарчĕ Сахрун. Кӳлнĕ лашасене тепĕр хут сăнаса çавăрăнчĕ. Пуçĕсенчен шăлса йăпанчăклăн ачашларĕ. Урхалăхсене, чĕлпĕрсене мĕнле çыхнине тĕрĕслерĕ. Тилхепене тытрĕ те: „Ну, Çивкă, уттартăмăр!“ — терĕ. Ун хыçĕнчен ытти акапуçĕсем те хĕл каçиччен канса выртнă аслă уйăн хура та кăпăшка тăприне чавтарса кĕрсе кайрĕç.

Инçех те мар, йунашар участкă çинче, МТС-чен килнĕ трактăрсем кĕрлеççĕ. Вĕсен кĕрлевĕпе манăн бригадăра йурлайурла ака тăвакаансен хаваслă çимфонийĕ çумне тӳпере парăлтатса вĕçнĕ май триллетекен тăри кайăксем те хутшăнчĕç. Массăлă ака пуçланчĕ.

Апрелĕн 25-мĕшĕ. Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче Сахрун мучи „лекци“ вуларĕ. Унăн сăмахĕсене пурте пысăк туйăмлă шăплăхпа итлесе ларчĕç. Тĕрĕс калать докладчик,—терĕ Сахрун, виçĕмкун каç клубра доклад туса панă йулташăн сăмахĕсене пайан тепĕр хут асаилнĕ май, çирĕплетсе. — Конешнă, турă пулман, пулма та пултарайман. Вăл çапла иккенне тахçанах еп, хам шкула çӳренĕ чухнех пĕлнĕ. Пĕринче çапла, мекеçленсе çăпата тăвакан аттене хирĕç ларнă та епĕ, турă ултă кун хушшинче тĕнче туни çинчен вулатăп. Вулатăп-вулатăп, ăнланаймастăп. Аттерен ыйтатăп: Кала-ха, атте. Мĕнле-ха капла, турă пĕрремĕш кун çутă тунă, а хĕвелпе уйăха тата çăлтăрсене тăваттăмĕш кун çеç тунă. Хĕвелсĕр мĕнле-ха малтанхи кунхинех çутă пулма пултарнă? — „Пĕлместĕп ачам. Урăхла çутă, хĕвелсĕр çутă, красçин çути йевĕрлĕскер пулнă пулĕ“, терĕ атте. Пупран ыйтса пĕлме хушрĕ. Тепĕр кунхинех шкулра, „саккунпужи“ урокĕ вăхăтĕнче пупран ыйтатăп. Мĕнле-ха, тетĕп. Ку кĕнеке çинче йăнăшрах çырман-ши, тетĕп. Йăнăш мар, тет пуп. Турă кĕнеки çинчен нимĕнле усал сăмах та калаçма йурамасть, тет. Есĕ çамрăк-ха, тет, пысăкрах пулсан сана ку сăмахсемшĕн Çĕпĕре те йама пултараççĕ, тет.Епĕ шиклентĕм. Пуп çине пăхрăм та: çук, ахаљ çеç ыйтса пĕлесшĕнччĕ, терĕм...

Сахрун мучи хăйĕн „лекцине“ тен татах та вăрăма тăсасшăнччĕ пулĕ. Сасартăках чăрăнчĕ вăл. Агитатăрсем çĕнĕ хаçат-журналсем илсе килнĕ те, малтан çавсене вулар-ха, терĕ. Учотчик те çитнĕ.

— Ну, шутларăн-и, мĕн чухлĕ сухаланă?

— Ĕнерхи нормăна сирĕн бригадă 180 процĕнт тултарнă,—терĕ учотчик, хăйĕн блок-ночĕ çине пăхса. — Хăвăрпа ăмăртакан иккĕмĕш бригадăран чылай малта пыратăр.

— Пайанхи мĕн чухлĕ?—ыйтрĕ Сахрун.—Пайан ĕнерхинчен те ытларах сухаланă вĕт?

— Каçхине калатăп. Шутламан-ха.

Апрелĕн 26-мĕшĕ Ирхи тĕтре сĕт пек шап-шуррăн курăнса пĕтĕм уй анлăшĕпе йăсăрланать. Кĕçĕр каçхине вăйлă, аслатилĕ çăмăр çуса кайнă.

— Лайăх çăмăр, кирлĕ çăмăр, — тет Сахрун.—Çăкăр çăмри. Çĕр усăлчĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех. Пăхăр ав,атсемĕр. Ĕнерхинчен, виçĕмкунхинчен нумай çăмăлрах шăвăнаç вĕт акапуçĕсем.

Тĕрĕс калать Сахрун. 18 сантиметр тарăнĕш сухаласа пыракан акапуçĕсем çăмăллăн шăваççĕ. Çăмăл пулмасăр? Лашисем вĕт! Мăнтăркка та вăйлă пирĕн лашисем. Мăнаçлăн ухăнса малала ывтăнаççĕ вĕсен пуçĕсем

Хĕвел кăнтăрла тĕлне çитеспе йал хапхинчен хĕрлĕ йалавсемлĕ колоннă тухнине сăнарăмăр. Сахрун мучи часах тавçăрса илчĕ:

— Шкул ачисем!—терĕ вăл. — Кунта ĕнтĕ, пирĕн пата митинг тума килеççĕ. Суйлав вĕт...Радио тăрăх та пĕлтерчĕç. Пайан суйлав кампанийĕ пуçланать.

Сахрун йăнăшмарĕ. Чăнахах та шкул ачисем пулнă. Вăхăтлăха ĕçе пăрахрăмăр. Пурте пĕрле пухăнса трактăрсем ĕçлекен участкă çине кайрăмăр. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес кампани пуçланнă йатпа пуçтарăннă митинга мана уçма хушрĕç. Уçрăм. Чи малтанах, суйлава хамăн бригадă мĕнле хатĕрленнине, суйлав умĕнхи ăмăрту ăнăçлăн сарăлса пынине, пур членсем те суйлав саккунĕсене тăрăшса вĕреннине каларăм.

Сахрун сăмах илчĕ:

— Каламалли питĕ нумай, терĕ вăл хаваслăн çĕкленсе. — Анчах, кĕскен калатăп. Пайан, суйлав кампанийĕ пуçланнă кун хам мĕнле тапхăрта, мĕнле пурăннине тепĕр хут асăнас килет. Акă, аллă çула çитрĕм. Ĕçлетĕп. Бригадир помошникĕ пулса ĕçлетĕп. Ывăннине пĕлместĕп. Ывăнма сăлтавĕ те çук. Кунсерен çĕнĕ хыпар. Кунсерен хамăн аслă çĕршывăм чечекленнине, вăл нимĕнле тăшман тапăнса çĕмĕрейми тĕреклĕленнине сăнатăп. Аслă ывăлăм флотра. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ сывлăшра вĕçет вăл. Теприне, трактăрис пулса ĕçленине, иртнĕ çул çеç Хĕрлĕ Çар ĕретне ăсатрăм. Танкиссен шкулĕнче вĕренет. Çыру çырать. Майăн 1-мĕш кунĕ присагă памалла. Ывăлсем хатĕрленнине пысăк савăнăçпа пĕлтерет. Арăм та сыхлав ĕçĕнче ман... Сывлăш сыхлас ĕçре. Ача çуратмалли суртра çеç тра пулса ĕçлет. Кĕçĕн хĕрĕм Хветур — сирĕн хушăра ак. 7-мĕш класра вĕренет. Отличницă. Çавсене пурне те аса илсе, сĕн, ĕçленĕçсемĕн ĕçлес килет, атсемĕр. Ĕçлер! Çитĕнӳсем хыççăн çитĕнӳсем тăвар, атсемĕр! Суйлава лайăх хатĕрленер. Пире çак телейлĕ те тулли пурнăçа туса паракансемшĕн, Ленин—Сталин партийĕшĕн хамăрăн сасăсене парар!

Тухса калаçакансем татах та пулчĕç. Пулашкинчен çĕнтерӳлĕ сасă, „Интернационал“ сасси пĕтĕм уйа йантăрати.

.. **Апрелĕн 28-мĕшĕ.** Ака тумалли плана 85 процент тултарни çинчен пĕлтерчĕ учотчик. Ыран ака пĕтет. Пысăк та хисеплĕ, ответлă ĕç вĕçленет.

Йуçкасси, Трак р.

Уполномоченный Чувашглавлита № 217. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. К

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.